27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
АПРЕЛЬ
26
ЮНКУН
83(6578) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Малта тăракан агротехника—çураки законĕ

Республика уйхирĕсенче суркуннехи ĕçсем сарăлсах пыраççĕ. Елчĕк, Пăрачкав, Пĕрремайски, Вăрнар, Калинино тата ытти чылай районсенчи колхозсем темиçе кун хушши çĕнĕ кĕрхи калчасене апатлантарçĕ, клевер акаççĕ, уйхирсене малтан, сумкурăк юлашкийĕсенчен тасатаççĕ, тăпра нӳрĕлĕхне ытларах сыхласа хăварас тĕллевпе ĕçлеççĕ. Колхозсем малта тăракан агротехника мероприятийĕсене пурнăçа кĕртсе Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнаççĕ.

Ăмăртăва хутшăннă пирĕн колхозсемпе МТС-сем çеç мар, вĕсенчи кашни бригада, звено, уйрăм çынсем—кашниех 1944 çулта ялхуçалăх ĕçĕсене кăтартуллă туса ирттерес конкретлă обязательствăсем илчĕç.

Калинин облаçĕнчи Краснохолмски районри «Красный путиловец» ялхуçалăх артелĕн членĕсен чĕнĕвне сӳтсе явса, пирĕн колхозсенчи ялхуçалăх специалисчĕсем хăйсене Марийпе Мордва республикисемпе социализмлă ăмăртăва тухса илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртес тĕлешпе мĕнле кĕрешнине тепĕр хут тишкерсе тухаççĕ.

Тăванлă республикăсемпе ăмăртăва тухса, пирĕн Хĕрлĕ Ялавлă республика питех те ответлă обязательствăсем илнĕ. Кăçал пирĕн тырпул тухăçлăхне чылай ӳстермелле, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе татах вăйлатса ямалла. Малта пыракан колхозсем гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн кĕрешӳ пуçарчĕç. Кăçал пирĕн уйхирти мĕнпур ĕçсене малта тăракан агротехника вĕрентнĕ пек туса ирттермелле.

Партипе правительство, 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планне çирĕплетсе, 1944 çулта ялхуçалăх ĕçĕсен пахалăхне тĕпренех лайăхлатма; тĕрĕс пусуçаврăнăшĕсем туса вĕсене çирĕп тытса пыма; кĕрхи çертмепе таса çĕртмесем тунă çĕрлаптăкĕсене ӳстерме; обязательнăй йĕркепе лайăх вăрлăхсем акса, акмалли нормăсене çирĕппĕн тытса пыма; вырăнти удобренисемпе анлăн усă курма тата тырпулсене пăхмалли правилăсене çирĕп пăхăнса пыма хушрĕç. **Колхозсемпе МТС-сен çуракинче хăйсен мĕнпур ĕçне тырпулсен тухăçлăхне пур майсемпе те ӳстерес тĕллеве пăхăнтармалла.**

Уйхир ĕçĕсене пуçăнна колхозсенче агротехника правилисене пурнăçлама тытăннă. Ку ĕçре агрономсем партипе правительство хăйсене панă тивĕçлĕхпе начар мар усă кураççĕ. Вĕсем çуракин агротехникине лайăх пурнăçласа пырассишĕн вăя хурса кĕрешеççĕ. Вăрнар районĕнчи кашни агронома 3—4 колхоз çирĕплетсе панă, вĕсем агротехника мероприятийĕсене пурнăçлас ĕçе организацилесе пыраççĕ.

Халĕ чи кирли—**уйхир ĕçĕсене вăхăтра пуçăнасси.** Хирти тăпра пĕтĕмĕшпех пиçсе çитессе кĕтмелле мар, уйрăм участоксем пиçсе çитнĕ хыççăнах ĕçе пуçăнмалла. Елчĕк районĕнчи колхозсем хирти пĕчĕк-пĕчĕк участоксем — çур гектар е кăшт пысăкрах лаптăк — пиçсе çитсенех хирти ĕçсене тăваççĕ. Пĕрремайски районри колхозсен руководителĕсем те хăйсем агротехника правилисене пурнăçласа пыман пирки юлашки çулсенче начар тухăçлă тырпул туса илнине туйса илчĕç, агротехника правилисене пурнăçлас тĕлĕшпе иртнĕ çулхинчен лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç. Унти колхозсем хăйсен уйхирĕсене хăмăлсенчен, çумкурăк тата иртнĕ çулхи улăм юлашкийĕсенчен пикенсех тасатаççĕ. Апрелĕн 24-мĕшĕ тĕлне пурĕ 207 гектара тасатнă. Районри 11 колхоз çурхи сухана пуçăннă. Кĕрхи калчасене апатлантарас тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлеççĕ.

Республикăри агрономсен, агротехниксен тата ялхуçалăхĕнчи мĕнпур специалистсен халĕ, çуракин питех те ответлă тапхăрĕнче, ырми-канми, вăхăта шута илмесĕр, тăрăшса ĕçлемелле. Колхозсемпе МТС-сем çуракинчи агротехника мероприятийĕсене лайăх пурнăçлассине чи малтан агрономсенчен килет. Партипе правительство агрономсен авторитетне çĕклерĕç. **Агрономсем колхозсемпе тунă агротехника мероприятийĕсене, çав мероприятисене тунă агроном хăйĕн е районри çĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ ирĕк памасăр, пăрахăçа кăларма е улăштарма никам та пултараймасть.** Агрономсен канашĕсемпе кăтартăвĕсене уйхирте ĕçсене пĕр пăрахăçламасăр пурнăçа кĕртмелле. Анчах, кунта пĕрлех, çакă вăл агрономсене хăйсене те лайăх ĕçлеме тивĕçлет.

Пирĕн республикăра опытлă, ĕçе юратакан агроном сахал мар. Ялхуçалăхĕнче малта пыракан специалисчĕсем—57 çынна пирĕн ялхуçалăх çулĕнче тăрăшса ĕçленĕшĕн премисем панă. Вĕсен хушшинче Елчĕк районĕнчи П. Щипцов юлташ, Вăрнар, Ишлей, Сентерварри районĕсенчи çĕрĕç пайĕсен агрономĕсем — И. Данилов, К. Федоров, Титов юлташсем пур.

Щипцов юлташ Елчĕк районĕнче 10 çул хушши ĕçлет ĕнтĕ. Вăл ĕçлеме пуçланăранпа районра малта пыракан колхозсем йышĕ ӳсрĕ. Вобопилов ячĕпе тăракан, «Марс», «Комбайн», «Осоавиахим» тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсем районра çеç мар, республикăра та чапа тухрĕç.

Опыт сахалтарах агрономсем малта пыракансен опытне йышăнса илмелле. Анчах хăшпĕр районсенчи агрономсем, уйрăмах Шăмăршă, Чкаловски районсенчи агрономсем, агротехника мероприятийĕсене тĕрĕс пурнăçласа пырассишĕн тивĕçлипе кĕрешмеççĕ-ха. Иртнĕ çул Чкаловски райçĕрĕç пайĕн агрономĕн Никитина юлташăн çавăрăнусăрлăхĕпе колхозсем вăрлăхлăх клевера пĕтĕмпех утă валли çулнă. Çапла вара хăшпĕр колхозсем пачах клевер вăрлăхĕсĕр тăрса юлнă. Шăмăршă районĕнчи «Светлый путь» колхоз юлашки çулсенче вырăнти удобренисемпе йĕркеллĕн усă курман. Ик-виçĕ çул каярах пухса хунă тислĕке кашни çулах тепĕр хут шута илсе, çĕрĕç пайне суя сведенисем парса ларнă. Ку районри ытти колхозсенче те агротехникăна тивĕçлипе пăхăнса пыман. Райçĕрĕç пайĕн агрономĕ Воинов юлташ вĕсене пĕлнĕ, анчах çитменлĕхсене пĕтерессишĕн кĕрешмен. Никитинăпа Воинов пек агрономсем колхозсенчи кăткăс производствăна сăнаса вĕренме тăрăшмаççĕ, ĕçе çиелтен тăваççĕ. Апла пулсан, вĕсем хăйсен тивĕçлĕхне пурнăçласа пыма мĕнле пултарĕç-ха?

Çуракине лайăх пахалăхпа ирттерессишĕн тăвал çĕршыв умĕнче агроном вырăнти партипе совет организацийĕсен руководителĕсемпе пĕр танах ответ тытать. Хăшпĕр агрономсем çураки ĕçĕсене кабинетран тухмасăрах ертсе пыма шутлаççĕ, вĕсене хирте кăнтăрла хăйă çутса шырасан та тупаймастăн. Паллах, кабинетран тухмасăр «ертсе пынипе» агротехника правилисене чăнласа пурнăçа кĕртме — **çуртыррисене йăлтах сапкăсемпе акса хăварма, çĕре лайăх ĕçлесе кăпкалатма, вăрлăхсене акмашкăн тĕрĕс хатĕрлеме** (яровизацилеме, чӳхеме тата ытти те), **вăрлăх участокĕсенче паха çăрлăх çитĕнтерме** т. ыт. те — тем пек опытлă агроном та пултараймасть. Агрономсен çуракин хĕрӳллĕ кунĕсенче ялалах **хирте** пулмалла. Агрономăн халь вăйлă тырпул никĕсне хунă çĕрте канаш парса, кăтартусем парса тата пулăшса пымалла. Çавăнпа та агрономсене хирте ĕçлеме лайăх условисем туса памалла. Чи малтанах вĕсене конторăри ĕçсенчен хăтармалла, мĕншĕн тесен пирĕн чылай районсенче агрономсемпе тĕрĕс мар усă кураççĕ, вĕсене кабинетра тумалли ĕçсем нумай хушаççĕ.

Агротехникăллă мероприятисене пурнăçа кĕртнĕ çĕрте агрономсене пахалăх **инспекторĕсем** вăйлăн пулăшса тăраççĕ. Аçта пахалăх инспекторĕсем уйхир ĕçĕсене тăтăшах тĕрĕслесе тăраççĕ, çав колхозсенче çулсерен тухăçлă тырпул туса илеççĕ. Иртнĕ çул республикăри колхозсенче пахалăх инспекторĕсем пулни пысăк вырăн йышăнса тăчĕ. Кăçал пахалăх инспекторĕсем пулма опытлă колхозниксене уйăрса лартмалла. Вĕсем те, агрономсем пекех, агротехникăна кăштах çеç пулсан пăсма хăтланнине те вăхăтра палăртма пултарччăр. **Уйхир ĕçĕсен агротехникине çиелтен туния кашнин тĕслĕхнех государствăна хирĕçле ĕç тесе шутламалла, айăплисене çийĕнчех çирĕппĕн ответ тыттармалла.**

Уйхирти мĕнпур ĕçсене малта тăракан агротехника вĕрентнĕ пек туса пырар. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура малта тухассишĕн, Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куççа çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне хамăр алăрах хăварассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешер!

Уйхирсенчи хĕрӳллĕ ĕç—тăшман пуçне хĕç

Çуракине кăтартуллă ирттерессишĕн кашни колхозникпе колхозница, трактористпа трактористка, агроном пĕтĕм вăя хурса ĕçлетĕр

Республика уйхирĕсенче

Чкаловски, Елчĕк, Комсомольски МТС-сен тракторĕсем колхоз хирĕсенче çураки ĕçĕсене тытăннă.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Калинин ячĕпе тăракан колхоз 20 гектар çинчи, «Коминтерн» колхоз 36 гектар çинчи, «Комбайн» колхоз 12 гектар çинчи, районĕпе — 206 гектар çинчи калчасене апатлантарнă. Çак колхозсенчех суйласа клевер акма тытăннă. Калинин ячĕпе тăракан колхоз 7 гектар, «Комбайн» колхоз 6 гектар клевер акнă.

* * *

СĔНТĔР. Районра клевер акас ĕç пуçланчĕ, паянхи кун тĕлне пурĕ 248 гектар акнă. çав шутран «Новая жизнь» колхоз 30 гектар, «Колос» колхоз 38 гектар, «Аврора» — 12 гектар, «КИМ» —24 гектар клевер акнă.

Районĕпе паянхи кун тĕлне 1317 центнер сĕрулмине яровизацилеме хывнă.

Уйрăм колхозсем юр айĕнчен тухнă кĕрхи калчасене апат пама тытăнчĕç, районĕпе пурĕ 127 гектар çинчи тырăсене апатлантарнă. Мичурин ячĕпе тăракан колхозра агротехникăна пăснă тĕслĕхсем пур. Кунта кĕрхи калчасене кайăк-кĕшĕкĕн йĕпе тислĕкĕпех апатлантарнă.

Я. ПЕТРОВ.

* * *

ИШЛЕЙ, (Телефонпа). Пур колхозсенче те тенĕ пекех сĕрулмине яровизацилеме тытăннă. «Мотор» колхоз—30 центнер, «Большевик» колхоз — 23 центнер, «Богатырь» колхоз—18 центнер, «Знамя», «Победа» колхозсем — 35 центнер, «МОПР» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем 35 центнер сĕрулми яровизацилеме хывнă.

Уйрăм колхозсем кĕрхи калчасем çинчи хулăм вырттакан юрсене чавса салатаççĕ, юр кайса пĕтнĕ хыççăнах тислĕк шĕвекĕпе тата кĕлпе апатлантараççĕ.

Андреев ячĕпе тăракан колхоз 5 гектар клевер акрĕ. Çавăн пекех «Коммунист» колхоз — 12 гектар, Владимир Ильич ячĕпе тăракан колхоз — 7 гектар акрĕç, районĕпе пурĕ 70 гектар ытла акнă.

Анчах районри 23 колхозра клевер вăрлăхĕ çитмест, вăл колхозсем халĕ кӳршĕри колхозсенчен ытти тырăсемпе улăштарса илеççĕ. Клевер акмасăр хăварни пусуçаврăнăшне пăсасси патне илсе пыни çинчен пĕлсе тăнă çĕртех уйрăм колхозсем вăрлăх тупас пирки кирлĕ пек ĕçлемеççĕ-ха.

Паян районра партипе совет активĕн канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу вĕçленнĕ хыççăнах районра ĕçлекенсем колхозсене Калинин облаçĕнчи Краснохолмски районри «Красный путиловец» ялхуçалăх артелĕн членĕсем чĕнсе каланине ăнлантарма тухса кайрĕç.

Г. ЛАЗАРЕВ.

Агротехникăна тĕплĕн пурнăçласа пымалла

ЙĔПРЕÇ, апрелĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри малта пыракан колхозсем çураки ĕçĕсене тытăнчĕç. Хальхи вăхăтра кĕрхи калчасене апат параççĕ, клевер акаççĕ.

Районĕпе пурĕ 109 гектар клевер акнă. Сталин ячĕпе тăракан колхоз 12 гектар, «Коминтерн» колхоз—14 гектар, «Красный партизан» колхоз—10 гектар акрĕç. Ĕç пахалăхĕ аван.

МТС тракторĕсем пурте ĕç вырăнĕсене çитнĕ, ĕçе хатĕр.

Тăпра сухалама ĕлкĕрнине кашни кунах агрономсемпе агротехниксем тата опытлă колхозниксем сăнаса тăраççĕ.

Çуракине паян-ыран тытăнаççĕ. Анчах та уйрăм колхозсенче хатĕрленсе çитменнине тата кая юлнă шухăшпа пурăнакан колхоз руководителĕсене тĕл пулма пулать-ха. Димитров ячĕпе тăракан колхоз кĕрхи калчасене апат пама та, клевер акма та тытăнман. Акмалли тулă, пăрçа, сĕлĕ вăрлăхĕсем кондициллĕ мар. «Первое мая» колхозра 108 центнер вăрлăха кондицие лартман. Колхоз председателĕнчен Иванов юлташран: — «мĕншĕн вăрлăхсене кондицие лартман»,—тесе ыйтсан, вăрлăх çителĕксĕр тесе ответлет. «Первое мая» тата Димитров ячĕпе тăракан колхозсем, агротехника мероприятийĕсене çулсеренех пăснă май, иртнĕ çул начар тухăçлă тырпул туса илчĕç. Иртнĕ çулхи йăнăшсенчен вĕсем халь те вывод тумасть, агротехникăна пăсас шухăшпа пурăнаççĕ. Агротехникăна пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пырсан кăна пысăк тухăçлă тырпул туса илме пултарассине ăнланма вăхăт, агротехника ыйтăвĕсене пурнăçламан колхозсен руководителĕсене пĕр хĕрхенмесĕр ответ тыттармалла.

П. КУРАКОВ.

Юр ирĕлсе пĕтессе кĕтсе лараççĕ

КӲКЕÇ, апрелĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Кăçалхи çуркунне иртнĕ çулхисенчен пачах урăхла. Кĕркунне çумăр пулман пирки тата çуркунне вăраха тăсăлнă пирки юр шывĕ пĕтĕмпех çĕре сăрхăнать тата тăпра юр ирĕлсе пĕтнĕ хыççăнах типме тытăнать.

Районри хăшпĕр колхозсем кăçалхи çуркуннен çак уйрăмлăхĕсене ăнланса илесшĕн мар, юр уйхиртен лапкипех ирĕлсе пĕтессе кĕтсе лараççĕ. «Крахмал», «Урожай», «Рыкша», «Стрела» тата ытти колхозсен уйхирĕсенче вырăнĕ-вырăнĕпе юр ирĕлсе пĕтнĕ, тăпра та акма юрăхлă, анчах çак колхозсем çуркуннехи ĕçсене пуçăнма шухăшламаççĕ те. Кĕрхи калчасене апат пама тытăнман, клевер акмаççĕ, кĕрхи калчасене сӳрелесси çинчен те шутламаççĕ.

Тӳррипе каласан, клевер акасси кунта, пĕтĕм районĕпе илсен те, пачах çителĕксĕр пырать. Паянхи куна 800 гектар вырăнне пурĕ те 135 гектар кăна акнă. Кăçал акмалли вырăнсене иртнĕ çулхи хăмăлсенчен, çумкурăкĕсенчен, улăм юлашкийĕсенчен тасатасси агротехникăллă паха ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен йышăннă постановленире çак мероприяти тăпрари нӳрлĕхе тытса хăварас тата çумкурăкĕпе кĕрешес ĕçре пысăк вырăн йышăннине уйрăмăнах палăртса хăварчĕç. Анчах та çак паха ĕçе кунта пурнăçламаççĕ-ха.

Иртнĕ çул Разин, Кадыков ячĕпе тăракан колхозсем, уйхире вырăнти удобренисем тăкман пирки, начар тухăçлă тырпул туса илчĕç. Çак йăнăшсене кунта кăçал та тума пултараççĕ. Тислĕк шĕвекĕпе, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе тата кĕлпе кĕрхи калчасене апат парас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Кĕрхи калчасене кăçал апатлантарма кирли пуриншĕн те паллă, çавăнпа та çак колхозсем вырăнти удобренисемпе анлăрах усă курас ĕç çине уйрăмăнах çавăрăнса пăхмалла.

«Çурхи кун—çулталăка тăрантарать», тенĕ ваттисем. Çак сăмахсем Шупашкар районĕнчи колхозсене те тӳрĕнех тивнине ăнланса илме вăхăт ĕнтĕ. Çуркуннехи ĕçсене халех пикенсе тытăнмалла.

Г. ПЕТРОВ.

Иртнĕ çулхинчен лайăхрах ĕçлессишĕн

ЭЛĔК, апрелĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем сĕрулмине яровизацилеме тытăнчĕç. «Труд» колхоз 200 пăт, Мăн Тукташри Горький ячĕпе тăракан колхоз 200 пăт, Чулкаçри «16 партсъезд» —180 пăт, Киров ячĕпе тăракан колхоз 150 пăт сĕрулми яровизацилеме хывнă. Яровизацилес ĕçе уйрăм çуртсенче тăваççĕ, çак ĕç валли опытлă çынсене уйăрнă.

Элĕк ялсоветĕнчи колхозсем, «Большевик» колхозсăр пуçне, çуракине пурте организованно кĕтсе илчĕç. Вăрлăхсем çителĕклĕ, лайăх пахалăхлă. Туртăм вăйне тата колхозниксене тĕрĕс вырнаçтарса тухнă. Ялсоветĕнчи колхозсем клевер акма тытăнчĕç. Ĕнерхи кун тĕлне 50 гектар ытла акнă. 500 пăт сĕрулмине яровизацилеме хунă. Вуншар гектар çинче кĕрхи калчасене апат параççĕ. Тата 2—3 кунтан çураки ĕçĕсене—сӳрелеме, сухри ака тума тытăнаççĕ.

«Шуçăм» колхозра (председателĕ Капитонов юлташ) икĕ кун хушшинче уйрăм участоксем çинче—10 гектар клевер акнă. Халĕ кунта кĕрхи калчасене улăмпа вакласа мульчировани тăваççĕ.

Кунта колхозниксем хушшинче массăллă-ăнлантарулă ĕçе аван туса пыраççĕ. Порфирьевăпа Трофимов агитаторсем—яланах колхозниксем хушшинче, хаçатсем вулаççĕ тата каласусем туса ирттереççĕ. Хăйсен каласăвĕсене вĕсем ĕç пахалăхĕ, çинчен, пысăк тухăçлă тырпул туса илесси çинчен уйрăмах тимлĕн чарăнса тăраççĕ.

Х. ЛИСИН.
(Хамăр корр.).

„Волга“ колхозра

Пĕррремĕш бригадăна ертсе пыракан Алексей Гаврилов хăйĕн опытлă акаканĕсене иртнĕ çулхи пекех хире организованно илсе тухрĕ. Сĕр нӳрлĕ. Нумай вырăнсенче ура тарăнах путать. Типĕрех вырăнсене суйласа илсе, Алексей Гаврилов бригадинчи пĕр звено паян клевер акать.

— Выльăх-чĕрлĕх апачĕн базине тума шăп çак кунсенче тытăнас пулать те ĕнтĕ, — шухăшлать ватă бригадир.

Юр айĕнчен кĕрхи калчасем ытла эшĕлĕх тухмарĕç. Çурхи çанталăк имшертерех калчасене сиенлеме те пултарать. Кун пек чухне вĕсене апат пани—пысăк ĕç, пысăк пулăшу.

«Волга» колхозăн хирне паян кĕрхи калчасене апатлама пур бригадăсенчен те сухрĕç. Çак кунсенче колхозăн уйĕнче ăнăшпех кĕрешӳ пуçланчĕ. Ĕнтĕ боевой листоксен пĕрремĕш номерĕсене кăларнă.

Колхоз акана лайăх хатĕрленнĕ. Агроном коммунистка М. Павлова ертсе пынипе, акакансем, сухаçăсем, сӳреçĕсем тата ыттисем те агрокружокра вĕреннĕ. Ку вăл кулленхи ĕçре нумай пулăшу парать. Сухалама çĕнĕ çынсем тухаççĕ. Халĕ ĕнтĕ унта арçынсем çукпа пĕрех. Çавăнпа кашни хĕрарăм хăйĕн ĕçĕнче агрономăн канашне пысăк вырăна хурса йышăнать.

Партипе правительствăн 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен йышăннă постановленийĕпе ВКП(б) Обкомĕн XVIII-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене кунта кашни колхозника ăнлантарса панă. Куллен пулса иртекен хыпарсене ака ĕçĕнчи колхозниксем патне вăхăтра çитерсе тăрас тĕлĕшпе колхоз председателĕ М. Иванов юлташ хăй çине тăрса ĕçлет. Вăл кашни ирхи тата каçхи радиопередачăнах тимлĕн итлет. Итленине хăйăх патне çитерет.

«Волга» колхоз членĕсем тăшмана аркатса тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшса пырассишĕн кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

С. СЕЛЕЗНЕВ.
Вăрнар районĕнчи «Волга» колхоз.

Çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермелле

СĔНТĔР. Çурхи хĕрӳ ĕçсен вăхăчĕ çитрĕ. Çуракине вăрçă вăхăтĕнчи пек ирттерессишĕн пур колхозсем те тăрăшса ĕçлеççĕ. Анчах Ярославкăри «Первая борозда» колхоз çак паха ĕçе кирлĕ пек ирттерме паянхи куна та хатĕрленсе çитмен-ха. Уйрăм вăрлăхсенчен—сĕлĕ 3 центнер, клевер пĕр центнер çитмест, пахча-çимĕçсен вăрлăхĕсем те çитмеççĕ. Акмалли тырăсене яровизацилеме хатĕрлемеççĕ, бутпуççисенчен чӳхеме имçамсем те çук.

Типтерлĕ тыткаламан пирки, выльăх апачĕ çитмест. Ку ĕçре уйрăмăнах колхоз руководителĕсем айăплă, мĕншĕн тесен хĕлле колхоз правленийĕн çуртне выльăха çитермелли улăмпа хутса пурăннă, халĕ ĕнтĕ лашасене пăтратса пама та улăм çук. Çавăн пирки лашасем начар. 33 лашаран 20 лашине, ытлах та ырхан пирки, çуракинче пачах усă курма май çук. Анчах колхоз руководителĕсем (председателĕ Антонов юлташ) çакăн пек çитменлĕхсене пĕтерме нимĕнле конкретнăй мера та йышăнмаççĕ.

Агитациллĕ-массăллă ĕçе те кунта организацилемен. Çураки вăхăтĕнче стена хаçачĕ кăларса тăма редколлеги те уйăрса хуман. Колхозниксем хушшинче партипе правительствăн «1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен» йышăннă постановленине тĕплĕн ăнлантарса паман, çавăн пекех Калинин облаçĕнчи Краснохолмски районри «Красный путиловец» колхозникĕсемпе колхозницисем чĕнсе каланине те сӳтсе-явман.

З. СЕМЕНОВ.

Подсобнăй хуçалăхра çуракине кăтартуллăн ирттеретпĕр

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. «Стрела» промартель коллективĕ подсобнăй хуçалăхра иртнĕ çулта тухăçлă пахча-çимĕç туса илчĕ.

Кăçал эпир çуракине пур енчен те хатĕрлесе çитрĕмĕр. Мартăн 15-мĕшĕ тĕлнех пу тĕлĕшпе мĕн тумаллине туса çитертĕмĕр. Лайăх вăрлăх акатлăр. Акса хăварнă тырпулпа пахча-çимĕçе пăхса пама çынсем уйăртăмăр. Подсобнăй хуçалăх участокне 12 тонна тислĕк, 3 тонна кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тăкрăмăр.

Пĕлтĕр туса илнĕ пахча-çимĕçпе столовăйра халĕ те апат хатĕрлетпĕр.

Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, подсобнăй хуçлăхра çуракине кăтартуллăн ирттерес тĕлĕшпе обязательствăсем илтĕмĕр.

Г. ЕРИСОВ,
Артель правлени председателĕ.

Консервăсем тăвакан 18 завода юсаса хута янă

Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенче СССР апат-çимĕç Халăх Комиссариачĕн консервăсем тăвакан заводĕсене хăвăрт юсаса хута яраççĕ. Краснодар крайĕнче, Ростов, Сталинград тата ытти облаçсенче 18 предприяти ĕçлет ĕнтĕ. Вĕсем Хĕрлĕ Çар валли çырларан, пахча-çимĕçсенчен, аш-какайран тунă консервăсем темиçе вунă миллион банка туса кăларнă.

Консерва промышленноçĕн предприятийĕсем юсаса хута ямалли заводсем валли хăйсен ытлашши станокĕсене, аппаратурине, машинăсен пайĕсене уйăрса параççĕ. Алма-Атари комбинат ирĕке кăларнă районсенчен пĕрне çулталăкра 15 миллион банка консерва кăларакан завод валли машинăсен тата электричество оборудованийĕн комплектне ярса парать. Ытти предприятисем те оборудовани уйăрса параççĕ. Вĕсене Киев, Черкассы, Мелитополь хулисене яраççĕ.

Консерва производствин чĕртавар базине юсаса ура çине тăратаççĕ. Халĕ Украинăри, Ростов тата Сталинград облаçĕсенчи 24 совхозра сахăр кăшманĕсем акаççĕ. (ТАСС)

Май уявĕ умĕнхи ăмăрту

Ӳкерчĕк çинче: Шупашкарти эрех заводĕнчи стахановец Александр Константинович **Сахаров** юлташ. Вăл ку заводра 32 çул ĕçлет.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Заводăн паллă çыннисем

Шупашкарти эрех завочĕн коллективĕ «Красный пролетарий» заводри рабочисем май уявĕ умĕнхи ăмăртăва сарса яма чĕнсе каланине хапăл туса йышăннă. Кашни рабочипе работница, аслă уяв ячĕпе стахановла вахтăна тăрса, уйăхри задание 5 кун малтан пурнăçлама пулнă.

Заводра кашни ĕçлекен хăйĕн умне çакăн пек задача лартнă: панă сăмаха тимлĕн пурнăçлас, фронтпа çĕршыв умĕнче парăмлă пулас мар. Çак шухăш-кăмălпа ĕçлесе, эрех завочĕн коллективĕ уйăхран уйăхах задание ирттерсе тултарать. 1944 çулхи пĕрремĕш квартал планне вăл 127 процент пурнăçланă. Апрель уйăхĕнче вара завод коллективĕ 20 кун хушшинчи задание 85 процент ытла пурнăçларĕ.

Эрех юхтаракан цех (начальникĕ Пигаева юлташ) пĕр кунхи задание 250 процент таран пурнăçлать. Çак цехри паллă стахановкăсем Е. Филиппова, А. Зарова, Е. Егорова юлташсем кашни сменăрах ĕç нормине 200 процентран кая мар пурнăçлаççĕ. Катка-пичкесем тунă çĕрте ĕçлекенсем Дьяченко, Мухамедзянов юлташсем те задание икĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

Пире 72 çулхи Александр Константинович Сахаров юлташпа тĕл пулма тиврĕ. Вăл çак заводра 32 çул ĕçлет. Хăйĕн ĕçне тĕплĕн вĕренсе çитнĕ. Юлашки вăхăтра Сахаров юлташ тасатакан цехăн начальникĕ пулса ĕçлет. Çак çул хушшинче вăл темиçе вунă çамрăка ĕç техникине вĕрентнĕ. Халь вăл май уявĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăнă.

— Эпир пĕтĕм вăй-хала нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах тата тĕпĕ-йĕрĕпех сĕмĕрсе тăкнă çĕрс паратпăр, — теççĕ кунта ĕçлекенсем.

Ф. МАЛЫШКИН.

Уйăхри задание 10 кун малтан пурнăçларĕ

ТĂВАЙ, апрелĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Промкомбинатра ĕçлекенсем май уявне социализмлă ăмăртăва çĕнĕ вăй-хăватпа сарса пынипе, производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илеççĕ. Коллектив уйăхри задание апрелĕн 20-мĕшĕ тĕлне пурнăçларĕ. Халĕ вăл планран ирттерсе продукци парать. Май уявĕ умĕнхи ăмăртура уйрăмăнах урапа-çунасем тăвакан, ата-пушмаксем çĕлекен, сăмăтă йăвалакан цехсем малта пыраççĕ. Урапа-çунасем тăвакан мастерсем С. Трофимов, Т. Коновалов, К. Никитин, Д. Кузьмин юлташсем задание 200 процентран кая мар пурнăçлаççĕ.

Комбинат коллективĕ хăйĕн умне иккĕмĕш квартал планне пĕр уйăх малтан пурнăçлас задача лартнă. Çак задачăна чыслăн пурнăçлассишĕн вăл халь никăçанхинчен ытларах тăрăшса ĕçлет.

В. АЛЕКСЕЕВ.

Государствăна сĕт-çу парассине вăраха ямалла мар

КАЛИНИНО. Районри чылай колхозсем государствăна сĕт-çу парассине йĕркеллĕн пурнăçласа пыраççĕ. Хăмăшри Папанин ячĕпе тăракан колхоз государствăна сĕт-çу памалли çулталăкри задание 43,2 процент, Карачуранри «Ленин çулĕпе» колхоз 31,6 процент, Уйкас Юнтапари «Новая жизнь» колхоз 22 процент пурнăçланă.

Анчах та районĕпе илсен, ку ĕç начар пулса пырать-ха. Районĕпе апрелĕн 20-мĕшĕ тĕлне государствăна сĕт-çу памалли задание 11 процент çеç пурнăçланă. «Социализм çулĕпе», «Правда», Сталин ячĕпе тăракан колхозсем çак ĕçе ку таранччен те тытăнман. Государствăна сĕт-çу парассине вăраха ямалла мар. Кашни колхозăн сĕт-çу фронта кирлине асра тытмалла

Б. ШОРНИКОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 24-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 24-мĕшĕнче фронтсенче палла улшăнусемех пулман.

Апрелĕн 23-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 16 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 51 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ЛЬВОВ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛНЕ ТАПĂННИ

Апрелĕн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци нимĕçсен Львов чугун çул узелĕнче капланса тăнă çар эшелонĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе пула пушарсем нумай тухнă, пушарсенче взрывсем пулнă.

Пирĕн пур самолетсем те хăйсен аэродромĕсене таврăннă.

☆ ☆ ☆

СЕВАСТОПОЛЬПЕ РУМЫНИ ПОРЧĔСЕМ ХУШШИНЧЕ ТĂШМАН СУДНИСЕНЕ ПЫРА-ПЫРА ÇАПНИ

Хура тинĕс флочĕн авиацийĕ Севастопольпе Румыни порчĕсем хушшинче тăшман судписене пыра-пыра çапнă. Бомбăсем тÿрĕ пырса лекнипе тăшманăн çарсем тиенĕ 7 транспорчĕ шыва путнă, çав çарсене нимĕçсем Севастопольтен Румыние илсе кайма хăтланнă. Путарнă транспортсем пурĕ пĕрле 16.000 тонна таяççĕ. Вĕсемсĕр пуçне хăвăрт çÿрекен десант баржине, торпеда катерне тата тăшманăн хуралта çÿрекен 3 карапне шыва путарнă. Тăшманăн темиçе суднипе вăйлах сиенленĕ.

* * *

Дубно хулинчен хĕвеланăçпелерехре тăшманăн пехотипе танкĕсем атака тунă. Малтан нимĕçсем, пирĕн малта тăракан подразделенисене кăштах хĕстерсе, икĕ яла тытса илме пултарнă. Унтан совет чаçĕсем нимĕçсене хирĕç пырса çапнă та вĕсене çав ялсенчен хăваласа кăларнă, хăйсен позицийĕсене каялла туртса илнĕ. Çав çапăçура пирĕн артиллеристсем нимĕçсен 12 танкне тата 5 бронетранспортерне персе çĕмĕрнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 400 вилли ытла выртса юлнă.

* * *

Станислав хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнелерехре нимĕç пехотин батальонĕ çĕрле пĕр юханшыв урлă каçнă. Ирхине совет боецĕсем гитлеровецсене атакăланă та аркатса тăкнă. Тăшманăн 200 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Нумай нимĕç шыва путса вилнĕ. Пирĕн подразделенисем аркатса тăкнă нимĕç батальонĕн мĕнпур хĕçпăшалне тытса илнĕ.

* * *

Украинăри 4-мĕш фронтăн авиацийĕ Севастополь хули районĕнче нимĕçсемпе румынсен çарĕсене йышлăн вĕçе-вĕçе пырса штурмланă тата вĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тÿснĕ. Севастополь порчĕн кăнтăр бухтинче икĕ транспорта тата хăй тĕллĕн çÿрекен пĕр баржăна шыва путарнă. Пирĕн летчиксем нимĕçсен аэродромне ăнăçлăн тапăннă, 14 самолета, çав шутра виçĕ моторлă «Юнкерс-52» йышши 5 транспортнăй самолета, пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 22 самолетне персе ÿкернĕ. Çапла вара Севастополь районĕнче кун каçиччен нимĕçсен 36 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин облаçĕнче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ апрелĕн 1-мĕшĕпе 6-мĕшĕ хушшинче нимĕçсен 3 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Шоссе çулĕсемпе ахаль çулсем çинче партизансем çар хатĕрĕсем тиенĕ 15 автомашинăпа 7 лава пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 76 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. 11 нимĕçе тыткăна илнĕ. Кунсăр пуçне, тăшманăн 24 салтакĕ хăйсен ирĕкĕпе партизансем енне куçнă.

* * *

Румынсен 2-мĕш горно-стрелковăй дивизийĕнчи 4-мĕш артиллери дивизионĕ пĕтĕмĕшпех Крымри партизансене тыткăна парăннă. Тыткăна лекнĕ капитан Теодор Велсану çапла каласа панă: «Пирĕн дивизион Ускут районĕнче Хура тинĕс çыранне хуралласа тăчĕ. Вырăссем нимĕçсен оборонине татнине эпир пуринчен кайран пĕлтĕмĕр. Вырăссем пĕр чарăнмасăр тата калама çук хăвăрт малалла куçса пынипе нимĕçсемпе румынсен чаçĕсене йăлтах йĕркерен кăларчĕç. Пурте çухалса кайрĕç. Пирĕн çинчен мансах кайнă, эпир нимĕн тума та пĕлмерĕмĕр. Эпĕ нимĕçсен штабне аран-аран шырса тупрăм. Старши офицер таçта питĕ васкать, хумханать. Вăл çапла каларĕ: сирĕн дивизион пĕр çын юлмиччен вырăссене хирĕç тăмалла, терĕ, анчах та пирĕн оборона участокĕ ăçта пулмаллине ăнлантарса параймарĕ. Эпир нимĕçсен ытти офицерĕсенчен те ыйтрăмăр, анчах вĕсем пире нимĕнле ответ та памарĕç. Нимĕçсем пире пăрахса хăварни пуриншĕн те паллă пулса тăчĕ. Пирĕн дивизион, Ангелеску майор ертсе пынипе, партизансем кĕрешекен района кайрĕ. Тусем хушшинчи пĕр тÿрем çĕре çитсен, эпир айлăм вырăна пытантăмăр та партизансем патне парламентера шур флаг йăттарса ятăмăр. Часах пирĕн пата партизансен пĕр ушкăнĕ килчĕ. Ангелеску майор вара хăйĕн дивизионне пĕтĕмпех, туппиcемпе, боеприпасĕсемпе пĕрлех, партизансен аллине пачĕ».

* * *

Фашистла нимĕç ирсĕрĕсем Феодосия хули урамĕсене юнпа пĕвенĕ. Нимĕçсем хăйсемшĕн ĕçлеме килĕшмен совет интеллигенцине уйрăмах хаяррăн тыткаланă. Нимĕç пуçкасаканĕсем нумай специалиста çакса е персе вĕлернĕ. Паллă хирурга Дашевские, Барановпа Вассерман врачсене тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ. Ватă терапевта Фиделева гитлеровецсем хула варринчи урамра çакса вĕлернĕ. Ирĕке тухнă хулара пурăнакан çынсем нумай шăтăка чавса кăлараççĕ, Феодосия таврашĕнчи канавсенче, çырмасенче тата лимансенче хăйсен тăванĕсене, фашистсем вĕлернĕскерсене, шыраса тупаççĕ. Нимĕçсемпе румынсен ирсĕрĕсем хулана нумай ишнĕ. Çав тери чаплă санаторисем, кану çуртĕсем, лечебницăсем вырнаçнă Ленин проспектне йăлтах ишсе пĕтернĕ. Вырăссен чаплă художникĕн Айвазовскин картина галерейипе çуртне çаратса, ишсе пĕтернĕ. Чи лайăх картинăсене нимĕçсем вăрласа Германие илсе кайнă. Халĕ галерейăпа çурта тискеррĕн аркатнин йĕрĕсем курăнса тăраççĕ. Чÿречесене çапса ватнă, сĕтел-пукансемпе килти япаласене çĕмĕрсе пĕтернĕ. Урайĕнче Айвазовскин çурса лÿчĕркесе пĕтернĕ кĕнекисем сапаланса выртаççĕ. Хуралçă Фома Иванович Дарменко çав галерейăна темиçе çул хушши сыхласа усранă, вăл Айвазовский вăхăтĕнче те ĕçленĕ. Фома Дарменко çапла каласа парать: «Нимĕçсем — чăн-чăн тискер çынсем. Вĕсем галерейăна аркатнă чухне эпĕ макăртăм, нимĕç офицерĕнчен вырăс художникĕн произведенийĕсене шеллеме йăлăнса ыйтрăм, анчах вăл кулчĕ çеç, хăйĕн ирсĕр ĕçне тума пăрахмарĕ». Нимĕçсем порта ишĕлтернĕ. Хулара нумай çурта сирпĕнтерсе янă, табак фабрикине, 11 шкула, почтăпа телеграфа тата ытти çуртсене çунтарса янă. Гитлеровецсем темиçе çĕр çурта минăсем лартса хăварнă, анчах та вĕсене сирпĕнтерсе яма ĕлкĕреймен. Хĕрлĕ Çар вирлĕн наступлени туса пынипе Феодосия хулине пĕтĕмпех ишесрен çăлса хăварнă.

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

Малта пыракан çамрăксем комсомола кĕреççĕ

ВЛКСМ Калинино райкомĕ колхоз çамрăкĕсемпе шкул ачисене комсомол ретне илес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет. Кăçал районĕпе 129 çамрăка илнĕ. Вăл шутран хĕрачасем—36, колхоз çамрăкĕсем — 75. Çавăнпа пĕрлех чылай çул хушши комсомол ретĕнче тăрса воспитани илнĕ 12 комсомолепа парти ретне панă.

Комсомолăн Çавалкассинчи «Çуттала», Уйкас Юнтапари «Новая жизнь», Мăн Ялти «Трактор» колхозсенчи пуçламăш организацийĕсенче кăçал 6—8-шар çамрăка комсомол ретне илнĕ. Кÿлхĕрринчи «Трактор» колхозри комсомол организацийĕн секретарĕ П. Васильев юлташ колхоз çамрăкĕсене ĕçре ÿссе пыма тата вĕсен политикăллă пĕлÿлĕхне ÿстерме куллен пулăшса пырать. Вĕсене комсомола кĕме пулăшать.

Акă, колхоз çамрăкĕсем Н. Сидоров, И. Спиридонов, А. Егоров, А. Фирсов юлташсем уйĕç бригадирĕсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсене комсомол организацийĕ яланах пулăшса пырать. Вĕсем ертсе пыракан бригадăсем çуракине пуринчен малтан хатĕрлесе çитрĕç. Халĕ çак çамрăк бригадирсене пурне те комсомол ретне илнĕ. Вĕсем комсомола кĕнĕ хыççăн хăйсен ĕçĕсене татах та лайăхлатрĕç. Бригадăсенчи колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче эрнере тăватă хутчен политинформацисем ирттереççĕ. Агротехникăна вĕренме кружок организациленĕ.

Комсомол организацийĕ пулăшнипе ялсоветĕнчи вулав çурчĕ те хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатрĕ. Вулав çуртне учительсем, комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем пухăнаççĕ. Кунти драмкружок кăçал 10 хутчен спектакль лартса пачĕ. Май уявĕ тĕлне «Аван пурăнатпăр» пьесăна вылямa хатĕрленеççĕ. Вулав çурчĕ çумĕнче «Çĕнтерÿшĕн» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать. Халиччен 5 номер кăларнă. Çĕнĕ хаçатсем килсенех комсомолецсем çамрăксене Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерĕвĕсемпе ют çĕршывсенчи лару-тăру çинчен ăнлантарса параççĕ.

Хурăн Кăкшăмри «Красноармеец» колхозри комсомолецсем (ВЛКСМ организацин секретарĕ П. Семенов юлташ) çуракипе хатĕрленес ĕçе активлăн хутшăнчĕç. 14 çулхи икĕ комсомолец, тимĕрçĕ ĕçне вĕренсе, ялхуçалăх машинисене юсанă. Вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе колхозра икĕ звено организацилене. Вĕсене участоксем уйăрса панă. Звено членĕсем çав участока çемçетме вырăнти удобренисем чылай хатĕрленĕ. Семенов юлташ 12 комсомолеца бригадăсенче агитаторсем пулса ĕçлеме хатĕрленĕ. Халĕ вĕсем хăйсене çирĕплетсе панă бригадăсенче агитациллĕ-массăллă ĕçе анлăн туса пыраççĕ.

Анчах ĕçри ÿсĕмсемпе лăпланса лармалли çук-ха. Комсомолăн Ермошкăри, Тувалькинăри Мичурин ячĕпе тăракан, Аçамçырмари Коминтерн ячĕпе тăракан колхозсенчи пуçламăш организацийĕсем кăçал пĕр çамрăка та комсомола илмен. Вĕсенче колхозниксем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе вăхăтра туса пымаççĕ.

Комсомол организацийĕсен ĕçне вăйлатмалла, вĕсен хăйсен йышне ÿстерессишĕн вăя хурса ĕçлемелле.

В. ЗАЙЦЕВ.

Малти ретре

ИШЛЕЙ. Комсомолăн «Клевер» колхозри пуçламăш организацийĕ çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе кăçал чылай ĕçсем турĕ. Комсомолецсен вăйĕпе 55 центнер ытла кĕл, 30 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, уя 1.200 лав тислĕк кăларнă. Вырăнти удобренисем пухас тата вăрлăхсем сортлас ĕçре çамрăк комсомолецсем А. Кожаковпа М. Кочергов юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç. Комсомолец К. Алмазов юлташ 2-мĕш бригадăри ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтериччен тимĕрçĕпе пĕрле ĕçлерĕ. Çавăн пекех комсомолецсем вăрлăхсем тасатса хатĕрлес, ракăрсене кÿлме вĕрентес тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлерĕç.

Комсомолецсем колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Колхозра уйăхра пĕрре «Комсомолец» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать. Вăл колхозри çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме пулăшать, стахановецсен паха ĕçĕсене тĕплĕн çутатса тăрать.

Союзра тăман çамрăксем хушшинче ăнлантарулла ĕçе анлăн сарса янă май, комсомол йышĕ те ÿсех пырать. Çак кунсенче колхозри чи активлă виçĕ çамрăк комсомола кĕчĕç.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Пĕлÿ тĕрĕслевĕ умĕн

Хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнче

ШУПАШКАР. Хĕрачасен пĕрремĕш номерлĕ вăтам шкулĕнче (директорĕ В. Сергеева юлташ) тĕрĕслеве хатĕрленесси план тăрăх пулса пырать. Плана малтанах учительсемпе вĕренекенсем хушшинче сÿтсе-явнă. Шкул дирекцийĕ, учительсене тĕрĕслÿ ирттермелли йĕркесемпе паллаштарас шутпа, инструкциллĕ канашлу ирттернĕ. 8-мĕш класра учительница Данилова юлташ математика пĕлĕвĕсене тĕрĕслеме билетсем хатĕрленĕ те ĕнтĕ.

Халĕ хĕрачасем, вĕреннине лайăхрах аса илес текe, хăйсен ирĕкĕпе тăватшарăн-пилĕкшерĕн пухăнса ĕçлеççĕ. Пĕри пĕлменнине тепри аса илсе каласа парать, ыттисем итлесе лараççĕ. Йăнăшсене тÿрлетеççĕ. Пĕлÿ тĕрĕслевне хатĕрленнĕ май, вĕренекенсем çулталăк хушшинче вĕреннине тĕплĕн каласа пама хăнăхаççĕ. Ăнланман ыйтусем пулсан, учительсенчен ыйтса пĕлеççĕ.

Пĕлÿ тĕрĕслевĕ пынă вăхăтра шкула ача ашшĕ-амăшĕсем те пысăк пулăшу пама пултараççĕ. Çавна шута илсе, шкул дирекцийĕ, хĕрачасен ашшĕ-амăшĕсене пухса, пĕлÿ тĕрĕслевĕ епле иртмелли çинчен ăнлантарса панă.

З. МИТРОФАНОВА.

Фронтри аттесемпе пиччесене отлично вĕреннипе савăнтарар

Совет шкулĕнче вĕренÿ çулĕн тăваттăмĕш чĕрĕкĕ вĕçленсе пырать. Çакă вăл вĕренекенсемшĕн ответлă вăхăт пулса тăрать. Тăваттăмĕш чĕрĕкре, вĕренÿ çулĕн программине вĕçленисĕр пуçне, çулталăк хушшинче мĕн вĕреннине тепĕр хут тĕплĕн пăхса тухас пулать. Пĕлÿ тĕрĕслевне ăнăçлăн ирттересси ăна лайăх хатĕрленнинчен килет. Çавăнпа та тĕрĕслеве учительсен те, вĕренекенсен те тăрăшса хатĕрленмелле.

Тĕрĕслеве хатĕрленесси йĕркеллĕ, план тăрăх пулса пымалла. Йывăртарах предметсене малтан вĕренме тытăнас пулать. Пуринчен ытла вырăс чĕлхине вĕренес тĕлĕшпе тимлĕнрех ĕçлемелле, ачасене тĕрĕс çырма, тĕрĕс калаçма вĕрентмелле.

Вĕреннине лайăхрах аса илмешкĕн иккĕн-виççĕн, виççĕн-тăваттăн пĕрлешсе вĕренсен лайăхрах пулать.

Сурхуннехи тĕрĕслев пуçланичченхи вăхăтпа тĕрĕс усă курса, кашни пионерăн, комсомолецăн, шкул ачин пĕлÿ тĕрĕслевне лайăх хатĕрленсе ăнăçлăн ирттерессишĕн кĕрешмелле.

Сталин юлташ ертсе пынипе пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар хамăрăн Тăван çĕршыва ылханлă тăшмантан тасатса пырать. Сирĕн аçăрсем, пиччĕрсемпе аппăрсем фронтра та, тылра та хăйсен вăйне тăшмана çĕмĕрсе тăкнă çĕре параççĕ. Сире те, ачасем, Тăван çĕршыв тăрăшса вĕренме, ĕçлеме хушать.

Хамăрăн аттесемпе пиччесене отлично вĕреннипе савăнтарар. Вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш вĕренÿ çулне ăнăçлăн вĕçлер!

А. НЕКРАСОВ,
РСФСР-ăн тава тивĕçлĕ учителĕ.

Яланах малта

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри Жербак, Забиякин юлташсем ертсе пыракан цехсен коллективĕсем ăмăртура ялан малта пыраççĕ. Асăннă цехсем апрель уйăхĕнчи задание пурнăçларĕç те ĕнтĕ. Юлашки вăхăтра Димитриев юлташ начальник пулса ĕçлекен цех та хăтартуллăн ĕçлеме тытăнчĕ.

Совет законĕсене çирĕппĕн пурнăçласа пырар

Вăрçă вăхăтĕнче совет законĕсене çирĕппĕн пурнăçа кĕртесси кашни гражданинăн тата государствăпа обществăллă учрежденисен хисеплĕ тивĕçĕ пулса тăрать. Совет законĕсене пурнăçа кĕртни хамăрăн совет государствине татах та çирĕплетме, унăн вăйĕпе хăватне тĕреклетме пулăшать. Мĕншĕн тесен совет законĕсем халăх интересĕсене, хамăр тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕне никама пăхăнмаллăхне хÿтĕлеççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче ĕç дисциплинине çирĕппĕн пăхăнас ыйту уйрăмах çивĕччĕн тухса тăрать. Совет халăхĕ ăна лайăх ăнланать. Вăл, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăр, фронта ытларах пулăшассишĕн, çĕнтерÿшĕн вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлет. Совет Союзĕнчи халăхсем хăйсен паттăрла ĕçĕпе мухтавлă Хĕрлĕ Çара çĕнтерÿ тума мĕн кирлисене пĕтĕмпех парса тăраççĕ.

Шел, анчах пирĕн предприятисенче ĕç дисциплинине пăсакансем те пур-ха. Хăшпĕрисем хăйсене валли лайăхрах вырăн тупасшăн пĕр предприятирен теприне куçаççĕ. Çапла вара пĕр предприятирен ĕçне сиен кÿреççĕ. Ĕç фронтĕнчен çавăн пек тарса, куçса çÿрекенсене хирĕç хаяррăн кĕрешмелле, вĕсене вăрçă вăхăтĕнчи законсем тăрăх ответ тыттармалла. Апла пулин те хăшпĕр предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем прогульщиксемпе дезертирсене хирĕç тивĕçлипе кĕрешмеççĕ-ха. Прокуратура органĕсем те закона пăсакансене çийĕнчех ответ тыттармаççĕ.

Республикăри хăшпĕр предприятисенче юлашки вăхăтра ăçта ĕçлени çинчен калакан документсемсĕрех çынсене ĕçе илнĕ тĕслĕхсем пур. Ун пек çĕрте вара ĕç дисциплинине пăхăнма юратман çынсем хăйсене валли вырăн тупма пултараççĕ. Хăшпĕр прокурорсем çакăн çине çаврăнса пăхмаççĕ. Çапла, Н. Н. Никифорова Шупашкарти пĕр заводран хăй ирĕкĕпех тухса кайнă та крахмал заводне пырса кĕнĕ. Крахмал завочĕн руководителĕсем ăна ĕçе илнĕ чухне малтан ĕçленĕ заводран мĕншĕн тухни çинчен документсем ыйтман. Ю. Н. Воробьевăна ĕçрен хăй ирĕкĕпе тухса кайнăшăн 1943 çулхи ноябрĕн 22-мĕшĕнче Çар трибуналĕ хăйне чĕнмесĕрех суд тунă пулнă. Çав судран тарса çÿрекен Воробьевăна сентябрĕн 16-мĕшĕнче «Липовка» артельте ĕçе илнĕ. Воробьевăна унти ĕç те килĕшмен, вара вăл вăрман заводне куçнă. Хĕрлĕ Чутай районĕн çыннине С. З. Захарова Удмурт республикинчи пĕр завода ĕçлеме янă пулнă. Захаров хăй ирĕкĕпех ĕçрен пăрахса килнĕ те Çĕмĕрлери «Большевик» завода ĕçе кĕнĕ.

Çÿлте асăннă предприятисен руководителĕсем, дезертирсене ĕçе илсе, вăрçă вăхăтĕнчи законсене пăснă. Унтан та ытларах «Большевик» завод руководителĕсем, дезертира хÿтĕлесе хăварас шутпа, Захарова мухтаса характеристика панă. Характеристика çине завод директорĕ Шустин, партбюро секретарĕ Розенберг, завком председателĕ Павлова алă пуснă. Çĕмĕрле районĕнчи прокурор Захарова ответ тыттарма ĕçе Çар трибуналне панă чухне Захарова ĕçе законсăр илнĕшĕн «Большевик» завод директорне ответ тыттарасси çинчен пĕр сăмах та каламан.

Вăрçă вăхăтĕнче ĕç вăйĕпе туллин усă курас ыйту питех те çивĕччĕн тăрать. Предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем партипе совет тата комсомол организацийĕсен, ĕç вăйне предприятисемпе учрежденисенче ялан ĕçлеме çирĕплетессишĕн тăрăшнипе пĕрлех, ĕç вăйĕ улшăнса тăрассине тата производствăна дезорганизацилекенсене хирĕç татăклăн кĕрешмелле. Предприятисемпе учрежденисенче ĕçе илес йĕркесене çирĕппĕн пăхăнмалла. Прокуратура органĕсен предприятисен руководителĕсем законсене мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесех тăмалла.

Вăрçă вăхăтĕнчи законсене çирĕппĕн пурнăçа кĕртесси — куллен тумалли ответлă ĕç пулса тăрать.

Н. ШУМИЛОВ,
Юстици капитанĕ.

Ют çĕршывсенче

Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи çыхăнусем çинчен

СССР НАРКОМИНДЕЛĔНЧИ ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИРЕ А. Я. ВЫШИНСКИЙ ЮЛТАШ КАЛАНИ ÇИНЧЕН ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ЛОНДОН, апрелĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» хаçат хăйĕн редакци çырнă статьинче, «Хельсинкире ухмаха ернĕ» тесе ят панăскерĕнче, финсем совет условийĕсене йышăнманни çинчен çапла çырать: «Финлянди правительстви хăйĕн халăхĕн асапĕсене пĕтерсе лартма çеç мар, хăйĕн çĕршывне хисеплĕ те çирĕп йĕркепе никама пăхăнман государство туса хума та май килсе тухнипе усă курманнишĕн пурте ÿкĕнĕç. Вăрçăн хальхи тапхăрĕнче çăмăлттайла хăтланма пултаракан правительство шурри хуйхăртать. Финсен лидерĕсем Совет Правительствипе калаçнă чухне тÿрĕ кăмăлпа калаçман пуль тесе шутлама пысăк сăлтавсем пур.

Перемири тумалли совет условийĕсене Хельсинкисĕр пуçне пур çĕрте те тенĕ пекех пысăк мар тата пурнăçлама май пур условисем тесе хаклани çинчен каласа, «Таймс» хаçат малалла çапла çырать: «Финляндин хальхи правительстви хăйĕн халăхĕн интересĕсене хÿтĕлеме тăрăшас вырăнне ĕлĕкхи пекех нимĕçсемшĕн ĕçлесе тăма хатĕр. Финн халăхĕ вăрçăпа ывăнса çитни паллă, вăл мир тума тăрăшать. Çакна шута илнипе ĕнтĕ Финлянди правительстви февраль уйăхĕнче перемири условийĕсем çинчен калаçма пуçланă. Анчах та вăл, хăй пуçарнă япалана ăнăçлăн малалла аталантарма тăрăшас вырăнне, ăна пĕтерсе лартмашкăн сăлтавсем çеç шырама тăрăшнă».

«Хăйсен хальхи позицине хÿтĕлесе тăрсан, — тесе çырать малалла «Таймс», —финсем мĕн пуррине йăлтах çухатма пултараççĕ. Власть хальхи правительство аллинчех юлсан, финсен пулас пурнăçĕ шанчăксăр пулать. Анчах çав правительство ăссăр хăтланса ишсе пынине ытти çынсем халь те çăлса хăварма пултараççĕ-ха». «Дейли экспресс» хаçат çапла çырать: Финляндин çак вăрçа пуçласа янăшăн айăплă çĕршывсемпе юнашар лармалла пулать, вĕсем пекех намăса тухмалла пулать, вĕсемпе пĕрлех ответ тытмалла пулать.

ЛОНДОН, апрелĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, вырăссемпе финсем хушшинчи калаçусем ăнманни Лондонра шанса тăнине пĕтерсе лартнă. Паасикиви Мускава кайсан, вырăссемпе финсем килĕшÿ тăвĕç тесе ытларах шанма пулатчĕ, анчах та финсен юлашки отвечĕ (ун çинчен Англи правительствине пĕлтерчĕç) çапла шухăшлаттарать: Хельсинкире власть пуçĕнче тăракан çынсем хăйсен çĕршывне пĕтесрен çăлса хăварма май килсе тухнипе усă курасшăн мар иккен. Финсем лайăхрах условисем çĕнессе шанма пултарайман. Çав условисене вĕсем мĕншĕн йышăнманни паллах мар. Хăçан та пулсан вĕсен вырăссем умĕнче ответ тытмаллах пулать. Вĕсем Россия кирек мĕнле хăйсемпе те нимĕçсене Финляндирен хăваласа кăларса, вĕсене унта урăх ярас мар тесе тăрăшнă çĕрте Англипе Америка Российăна пулăшмĕç тесе шутлама пултараймаççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат хăйĕн «Хельсинки вылять» тесе ят панă умстатьинче çапла çырать: Финлянди правительствин отвечĕ Америка халăхне пĕртте кăмăла каймарĕ. Совет условийĕсем Финляндие çул уçса паначчĕ, Финлянди ăна хăйĕн наци тивĕçлĕхĕпе никама пăхăнманлăхне пĕтерсе лартмасăрах йышăнма пултаратчĕ. Финлянди правительстви çав условисене йышăнмарĕ, çапла вăл Финляндие вăрçăра аркатса тăкас хăрушлăх умне илсе пырса тăратрĕ.

«Финлянди правительствишĕн хальхи вăхăтра çакă паллă пулмалла,—тесе çырать хаçат:—Пĕрлешÿллĕ Штатсем финсен ыйтăвне Российăсăр е Российăпа хирĕç сÿтсе-явма пултараймаççĕ. Финляндие Германипе çыхăнма пăрахма ыйтнăччĕ. Халĕ ĕнтĕ Мускав Хельсинкире нимĕçсем тус пулса тăраççĕ тесе шутланипе, Финлянди Германи малалла та хирĕç тăма пултарĕ тесе шанса вылять тесе шутланипе килĕшмелле пулать». Хаçат çакна палăртать: «Финлянди гитлеризмпа пĕрлех пĕтсе ларĕ, гитлеризмпа пĕрлех ответ тытĕ».

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ДЮССЕЛЬДОРФПА БРАУНШВЕЙГ ХУЛИСЕНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, апрелĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: Англин бомбăсем пăрахакан авиацийĕн апрелĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тунă ĕçĕсене пин самолет ытла хутшăннă. Дюссельдорфпа Брауншвейг хулисене йышлăн вĕçсе пырса тапăннă. Малтанлăха палăртнă тăрăх, бомбăсем пăрахни питĕ ăнăçлă пулнă.

Йывăр бомбардировщиксем Лаонри (Çурçĕр Франци) сортировка станцине те атакăланă.

«Москито» йышши самолетсем Мангеймри тĕрлĕ объектсем çине бомбăсем пăрахнă. 42 самолет хăйсен базисене таврăнман.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: апрелĕн 22-мĕшĕнче «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши самолетсем —750 самолетран пуçласа 1.000 самолета çитиччен—çавăн чухлех истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Гаммри (Хĕвеланăç Германи) пысăк сортировка станцине тапăннă.

ЛОНДОН, апрелĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 300 бомбардировщикĕ, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, ĕнер ирхине тăшманăн Франци çыранĕнчи çар объекчĕсене тапăннă. Кăнтăрла союзниксен авиацийĕн ытти соединенийĕсем çав объектсем çинех бомбăсем пăрахнă. Çав кунах американецсен самолечĕсем Германири 7 аэродрома тапăннă, вĕсем самолетсем вĕçсе хăпармалли площадкăсем çине, мастерскойсем çине тата самолетсем тăмалли вырăнсем çине бомбăсем пăрахнă.

Апрелĕн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Брюссель хулинчен 6 мильăра ларакан Вильвордри çыхăну япалисен склачĕсене тапăннă. «Москито» йышши самолетсем Мангейма тапăннă.

ЛОНДОН, апрелĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер кăнтăрла американецсен Италири йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Винер-Нейштадта тапăннă. 3 авиаци завочĕ çине тата Венăран 17 мильăра ларакан аэродром çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем нумайĕшĕ тĕлленĕ вырăнсене тÿрех пырса лекнĕ.

ЛОНДОН, апрелĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: паян кăнтăрла американецсен йывăр бомбардировщикĕсен питех те пысăк соединенийĕсем, истребительсен хăватлă соединенийĕсем хÿтĕлесе пынипе, Фридрихсхафенри авиаци завочĕсене тата Мюнхен районĕнчи аэропортсене тапăннă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çав операцисенче 1.500 самолета яхăн пулнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ БУХАРЕСТ, ПЛОЕШТИ ТАТА БЕЛГРАД ХУЛИСЕНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, апрелĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем, истребительсем йышлăн хÿтĕлесе пынипе, паян (юлашки вунă кун хушшинче виççĕмĕш хут ĕнтĕ) Бухарест районĕнчи главнăй сортировка станцийĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Çавăн пекех тата Плоештири чугун çул сооруженийĕсем çине бомбăсем питĕ нумай пăрахнă. Çанталăк лайăх тăнă, тапăну ăнăçлă пулса иртнĕ.

«Вĕçекен крепост» йышши самолетсем çав кунах Белградри авиаци заводне тапăннă.

ДУНАЙ ТĂРĂХ ВЕНГРИ ПАРОХОЧĔСЕМ ÇÜРЕССИ ЧАКСА ПЫРАТЬ

СОФИЯ, апрелĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Зора» хаçат çапла пĕлтерет: Англипе Америка самолечĕсем пăрахнă минăсем çине пырса кĕрсе, Дунай çинче венгерсен чылай пароходĕсем пĕтнĕ, çурăла-çурăла кайнă. Дунай тăрăх çÿрекен чи пысăк пароход «Королева Елизавета», Будапешт районĕнче сиенленнĕ пирки, шыв хĕррине тухса ÿкнĕ. Вăл ишсе çÿрекен магнитлă мина çине пырса кĕнипе çĕмĕрĕлнĕ, пароход çинче 30 çын аманнă. Венгерсен пароход обществи Дунай тăрăх пароходсем çÿрессине чакармалла тунă.

ÇĔНĔ ГВИНЕЙĂН ГОЛЛАНДИ ПАЙНЕ СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ АННĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсем Çĕнĕ Гвинейăн Голланди пайĕнчи çурçĕр çыранне пырса аннă. Çарсем 150 мильăна çити сарлакăш участок çине пырса аннă, вĕсем çак пунктсенче аннă: Голландия (японецсен пысăк çар бази), Айтапе тата Танамера ятлă бухтăра. Союзниксен çарĕсем Гумбольдт бухти районне йышăннă. Çарсене анма карапсем артиллерирен персе тата сывлăшри самолетсем бомбăсем пăрахса хÿтĕлесе тăнă. Бомбăсем пăрахакан самолетсем сывлăша авианосецсем çинчен вĕçе-вĕçе хăпарнă. Союзниксен çарĕсенче çухатусем пысăк пулман.

Çапла, союзниксен çарĕсем вăрçă пуçланнăранпа Голланди территорийĕ çине малтанхи хут десант антарнă.

Тÿрлетни

«Чăваш Коммуни» хаçатăн ĕнерхи номерĕнче, пĕрремĕш страницăри пилĕкмĕш колонкăра— «сапаласиинчен», «сапаламаллах», «сапаласси» тенисене «сапласиинчен», «сапламаллах», «сапласси» тесе вуламалла

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, заместительпе секретарĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

Типографи № - Управления полиграфической промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.

НТ 00560